Муркаш районĕ 65 çул тултарнă май

# Район юбилейне паллă тăватпăр

Районăмăра йĕркеленĕренпе 65 çул çитрĕ. Темĕн чухлĕ мероприяти ирттереççĕ çак уява халалласа. Акă Сосновкăри вĕрентӳпе культура центрĕнче вăй хуракансем шкул ачисемпе пĕрле ĕнер район юбилейне библиотекăра çавра сĕтел хушшине ларсах паллă турĕç. Чуманкасси ял библиотекинче те çакнашкал уяв ирттерни çинчен З. Иванова библиотекарь хыпарларĕ. Ĕнер çак икĕ библиотекăра та районти библиотекарьсем хатĕрленĕ «Муркаш районĕнчи çыравçăсемпе таврапĕлӳçĕсем» ятлă электронлă кĕнекене пахаланă.

**Зоя Ивановна хыпарĕнчен:** «Çак электронлă кĕнекепе паллашма тата ăна сӳтсе явма Чуманкассинчи вăтам шкулти 8 класра вĕренекенсем кăмăл пурри çинчен малтанах пĕлтерчĕç. Çавăнпа та уроксем вĕçленсен хăйсен класс ертӳçипе С.В. Алексеевапа библиотекăна тӳрех килчĕç. Малтанах ачасемпе Муркаш районĕ мĕнле йĕркеленни çинчен калаçрăмăр. Вĕсем халь пирĕн района кĕрекен хăш-пĕр ялсем малтан юнашар районсене кĕнине пĕлсе тĕлĕнчĕç. Чуманкасси ял тăрăхĕ те малтанах Муркаш районĕнче шутланманнине пĕлсен вара: «Эпир çавах Муркашсем пулатпăрччĕ», – тесе те каларĕç. Ачасем районпа мăнаçланнине пĕлтерчĕç. Хыççăн вара электронлă кĕнекепе питĕ тĕплĕн паллашрăмăр, библиотекăра йĕркеленĕ «Чечеклен, Муркаш Ен!» кĕнеке выставки те ачасен кăмăлне кайрĕ».

**Татьяна Зиновьевна хыпарĕнчен**: «Сосновка шкулĕнче 9 класра вĕренекенсем С.Г. Никифорова класс ертӳçипе библиотекăна пуçтарăнчĕç. Ачасем пĕчĕкренех пĕлекен Юрий Скворцов, Александра Лазарева çыравçăсен ячĕсемпе юнашар кĕнекере çамрăк çыравçăсен ячĕсем тăни ачасен пĕлĕвне ӳстерме пулăшрех. Кĕнекери кадрсемпе паллашнă май ачасен ыйтусем те çуралчĕç. Вĕсем çине тулли хуравсем пама тăрăшрăм. Вĕренекенсем хушшинче хайлавсем çырса пăхас шутлисем пулни те сисĕнчĕ.

«Чечеклен, Муркаш Ен!» кĕнеке выставкипе те шкул ачисем интересленсех паллашрĕç. Кунта темĕн çинчен те, такам çинчен те пĕлме пултарчĕç-çке вĕсем. Районăн гербĕ, гимнĕ те куç умĕнчех. Выставкăра шкул ачисем Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчи паллă çынсемпе паллă çыннисем çинчен хатĕрленĕ рефератсем те хăйсен тивĕçлĕ вырăнĕсене йышăнчĕç.

Муркаш районĕнче миçе çын пурăнать? Миçе çамрăк? Çак тата ытти нумай интереслĕ цифрăсене те пĕлтертĕмĕр ачасене. Вĕренекенсем района савса сăвăсем те вуларĕç.

Февралĕн 20-мĕшĕнче вара Сосновкăри вĕрентӳпе культура центрĕн спортзалĕнче тепĕр интереслĕ мероприяти иртет. Ирхи 10 сехетре волейбол вăййин ветеранĕн Г.Е. Лукинăн парнисене çĕнсе илессишĕн çак вăйăпа шкул ачисен командисем хушшинче ăмăрту пулать. Пурне те йыхравласа хапăл туса кĕтетпĕр».

**Н. АНДРЕЕВА.**

Паян – Сăваплă Валентин кунĕ

# Ытарма çук лайăх Валентинăсем

Муркаш районĕнче чаплă Валентина пур тесен, ăна пурте пĕлеççĕ. Вăл – Валентина Егорова спортсменка. Вăйлă, чăтăмлă, хастар хĕрарăм. Никам та хирĕçлемĕ. Тĕнче спортĕнче вăл хăваракан йĕр питĕ сарлака. Исетеркке ялĕнче çуралса ӳснĕ чăваш хĕрĕ хăй çинчен, хăйĕн тăван ялĕпе районĕ çинчен тĕнчипех пĕлтерме пултарчĕ. 1992 çулхи Олимпиадăри марафон вара Валентинăна Муркашсемшĕн халăх геройĕн шайнех çĕклерĕ. Пĕтĕм вăй-халне панă тренировкăсем кĕтнĕ тата тивĕçлĕ результатсем патне илсе çитерни тĕрĕсех ĕнтĕ. Темиçе хут тĕрлĕ ăмăртусен чемпионки вара тăван ялне, Муркаш районне килмесĕр тăмасть. Чунĕ çапла çак хастар чăваш хĕрарăмĕн. Спортра çӳллĕ шая хăпарнă пулин те, Валентина Егорова ашшĕ-амăшĕн килне килсен алла çава та, кĕрепле те тытать... Ĕçрен хăраманни пулăшнă та ĕнтĕ ăна ӳсĕмсен çулĕпе утма.

Пирĕн редакцие Марина ятлă хĕртен килнĕ çыру вара тепĕр Валентинăпа паллаштарать. Пачах урăхлипе, анчах çак хĕрарăмсен пĕр пеклĕхĕ те çук мар. Акă паллашсамăр çырупа.

**«Манăн пурнăçра та, ыттисенни пекех пулĕ, витĕмлĕ те паллă вырăн йышăнакан çын пур. Вăл – Валентина Григорьевна Кольцова.**

**Эпĕ кăçал Шупашкарти медицина колледжĕнчен вĕренсе тухатăп. Валентина Григорьевнана вара 2-мĕш класранпах, 10 çултанпах пĕлетĕп. Юнкă шкулĕнче вĕреннĕ чух эпĕ вăл ертсе пыракан «Аленушка» кружока çӳреттĕм. Çемçе теттесем çĕлеме питĕ килĕшетчĕ. Çĕленисĕр пуçне кружока çӳрекенсемпе Валентина Григорьевна тĕрлĕ вăйăсем вылятчĕ, чей те ларса ĕçме вăхăт тупнă вăл пирĕнпе. Ташă каçĕсем те йĕркелеме ӳркенмен пирĕн вĕрентекен.**

**Вăл пирĕншĕн, чăнах та, иккĕмĕш анне пулнă. Унăн аллисем ылтăн, кăмăлĕ те ырă. Эпир ун йĕри-таврах чупкалаттăмăр. Тăван амăшĕ çумĕнчи пĕчĕк пепкисем пекех. Ытти учительсем те ăмсанатчĕç вара.**

**Эпĕ çав шкулта тăватă çул кăна вĕрентĕм. Пире, пиччепе иксĕмĕре, Куславккари интерната вырнаçтарчĕç. Валентина Григорьевна вара пире унта та пăрахмарĕ, пулăшсах тăчĕ. Час-часах вăл пирĕн пата кучченеçсемпе пырса каятчĕ. Укçитенкине те шеллеместчĕ.**

**Пичче Авиаци институтне вĕренме кĕчĕ ĕнтĕ. Ăна вĕренме кĕме те пулăшрĕ пирĕн юратнă ырă çыннăмăр. Манăн та малалла вĕренес шухăш пур-ха. Пĕлетĕп, вăл чĕреренех пулăшĕ. Валентина Григорьевна никама та инкекре пăрахма пултарайман çын. Ăш пиллĕхĕ, ыр кăмăллăхĕ унăн туп-туллиех. Хăй те ачалăхра инкек-синкек нумай курнăран пулĕ.**

**Халĕ Валентина Григорьевна Мăн Сĕнтĕрти ваттисен çуртĕнче пурăнать. Эпĕ те ун патне хăнана çӳретĕп. Унта пурăнакан ватăсенчен те Валентина Григорьевна пирки пĕр сивĕ сăмах та илтмен. Мĕншĕн тесен вăл чăннипех те ытарма çук питĕ лайăх çын».**

Çакăн пек хĕрарăмсемпе эпир, Муркаш çыннисем, чăнах та мухтанма пултаратпăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Аукцион

## Администрация Моргаушского района Чувашской Республики извещает о проведении открытого аукциона

**Форма торгов** - открытый аукцион.

**Наименование аукциона** - открытый аукцион на право заключения договора аренды нежилого помещения для размещения банкомата, расположенное на первом этаже в здании администрации Моргаушского района по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, село Моргауши, улица Мира, дом 6.

**Основание проведения аукциона** – постановление Главы администрации Моргаушского района Чувашской Республики № 70 от 12.02.2009 года

**Заказчик аукциона** - Администрация Моргаушского района Чувашской Республики.

**Аукцион проводит** - Общество с ограниченной ответственностью «Юридическая фирма «Гарантия Права»

Место нахождения: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Гагарина, 35 «б»

Почтовый адрес: 428000, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Гагарина, 35 «б»

Номер контактного телефона (факса) (8352) 28 - 29 – 89, +7 905 029 12 03

Адрес электронной почты: garantiaprava@mail. ru

**Предмет аукциона:** право заключения договора аренды нежилого помещения для размещения банкомата, расположенное на первом этаже в здании администрации Моргаушского района по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, село Моргауши, улица Мира, дом 6.

**Начальная (стартовая аукционная) цена:** начальная (стартовая аукционная) цена аренды нежилого помещения определяется на основании отчета об оценке, выполненного независимым оценщиком.

**Перечень нежилых помещений, выставленных на торги (аукцион):**

**Лот №1** – нежилое помещение №11, расположенное на первом этаже в здании администрации Моргаушского района по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, село Моргауши, улица Мира, дом 6, площадью 8,0 кв.м.

**Начальная (стартовая аукционная) цена нежилого помещения (размер годовой арендной платы) -** 12000 (двенадцать тысяч) рублей.

**Сумма задатка** – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы нежилого помещения.

**Шаг аукциона** – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы нежилого помещения.

**Срок, место и порядок предоставления аукционной документации.**

Документация об аукционе предоставляется по адресу:

Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Гагарина, дом 35 «б».

Срок предоставления: с 14 февраля 2009 года по 16 марта 2009 года.

Порядок предоставления документации об аукционе: в электронном виде на основании заявления любого заинтересованного лица, поданного в письменной форме, в течение двух рабочих дней со дня получения соответствующего заявления.

Плата за предоставление документации об аукционе не взимается.

Заявки на участие в аукционе предоставляются по адресу:

Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Гагарина, 35 «б».

Сроки предоставления заявок: с 14 февраля 2009 года по 16 марта 2009 года.

**Обеспечение заявки на участие в аукционе.**

Размер обеспечения заявки на участие в аукционе составляет двадцать процентов начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы нежилого помещения.

Банковские реквизиты для перечисления денежных средств обеспечения заявки на участие в аукционе: ***ООО «Юридическая фирма «Гарантия права»***

***ИНН/КПП 2130007402/213001001***

*р/с 40702810300960000813 в Чебоксарском филиале ОАО «Банк Москвы»*

*к/с 30101810200000000767*

***БИК 049706767***

Назначение платежа: залоговая сумма за участие в аукционе.

**Место, дата и время проведения аукциона.**

Аукцион проводится по адресу:

Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, 6.

Время проведения аукциона 17 марта 2009 года 09 часов 50 минут по московскому времени.

***Директор ООО «Юридическая фирма «Гарантия Права» ДЕНИСОВ А.И.***

**ИП Баранов Э.И. продает строительные материалы: доски хвойные обрезные, брусья, металл-швеллеры, угольники, трубы, цемент, шифер.**
**Обращаться в «Моргаушагропромснаб» или по тел.: 8-903-346-40-58. 2-5.**

**ИП Ершов А.В. делает на заказ банные печи любой формы, а также гаражные, уличные ворота. Продает угольники, швеллера, трубы на забор и ворота. Доставка. Обращаться по тел.: 8-919-655-21-51 (Моргауши, плодокомбинат). 3-5.**

www.yandex.ru

## Прогноз погоды с 14 по 21 февраля

| сб 14 | вс 15 | пн 16 | вт 17 | ср 18 | чт 19 | пт 20 | сб 21 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| облачно, небольшой снег | перем. обл., небольшие осадки | облачно, небольшой снег | облачно, небольшой снег | облачно, небольшой снег | снег | облачно, небольшой снег | облачно, небольшой снег |
| -1 | -1 | -2 | -2 | 0 | 0 | 0 | -3 |
| -2 | -6 | -2 | -2 | -4 | -1 | -5 | -12 |

**Срочно куплю квартиру или дом в с. Моргауши (недорого).**
**Тел.: 8-917-655-41-37.**

**20 февраля с 9-00 часов до 18-00 часов проводится выставка-продажа обуви из натуральной кожи, производство городов: Казань, Ульяновск, Москва и республики Беларусь. Широкий ассортимент модельной осенне-зимней обуви.**

Пĕлтерӳсем. Объявления

**Покупаю бычков, телок и коров живым весом и мясом. Тел.: 8-909-304-08-81, 68-5-89. 4-5.**

**Продаю кирпич: керамический одинарный, полуторный, двойной; силикатный: белый, желтый, серый; блоки керамзитные, пеноблоки, кольца колодезные, шифер, цемент. Доставка бесплатно, услуги автотранспорта, крана манипулятора.**
**Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-88-00-483. 5-7.**

**Халăхран лайăх хакпа ĕне, тына, вăкăр ашăн тата чĕрĕ виçепе туянатпăр. Тел.: 60-7-10, 8-905-343-60-63. 5-5.**

**Продаю бетонные блоки высокого качества, пропаренные, вибропресованные, 20х20х40 - 38 руб., перегородки от 28 руб. с доставкой. Тел.: 8-902-663-37-77. 3-5.**

**Продаю блоки керамзитобетонные пропаренные, цемент. Дешево, доставка.**
**Тел.: 8-902-328-87-87, 8-902-327-55-65. 6-9.**

**ИП Лукина С.М. оказывает услуги:**
**- оценка объектов недвижимости, земельных участков от 2000 рублей;**
**- юридическое сопровождение операций по оформлению прав на объекты недвижимости, земельные участки от 500 рублей. Тел.: 8-927-849-61-39.**

**Продаю блоки керамзитобетонные 12х20х40, 20х20х40, керамзит, щебень, щебень кирпичный, песок речной, ОПГС (гравмасса), шифер 7-ми, 8-миволновый, цемент М-400 (40 кг) от 160 руб.**
**Обращаться: 8(83541)2-18-80, 8-917-661-93-11, 8-903-379-16-62, 8-919-666-55-77. Андрей. 1-2.**

**ООО «ЭНЕРГОСЕРВИС», расположенный у д. Москакасы, реализует за наличный и безналичный расчет населению и организациям: железобетонные кольца для колодцев и выгребных ям (оказывает услуги по бурению и транспорту), скидка 20% до 10 марта; железобетонные столбы 2200 мм; столбы металлические для оград 3000 мм; печи банные металлические с котлами (металл 8 мм), печки-прачки, печки-буржуйки; автомашина ГАЗ-52 грузовая (испр.); автомашина ГАЗ-52 специальная с будкой (испр.); авторезина на ГАЗ-53; запчасти на ВАЗ-2105 (двигатель с паспортом); запчасти на Москвич-412, ИЖ-2715; проволока, тросс стальной для устройства сетки-рабицы; цемент М-400; емкости для воды до 10 м3; зерно фуражное (овес, ячмень, пшеница, мука).**
**Услуги: производим тех. обслуживание легковых автомашин (замена смазки фильтра); автотранспортные услуги; выполняем все виды электромонтажных работ (ВЛ-0,4 кВ, ВЛ-10 кВ, КТПН, внутренние электропроводки) лицензия 1051; монтаж полипропиленовых труб на водопровод и отопление. Цены ниже рыночных (рассрочка в платеже), бартер.**
**Требуются на работу: газоэлектросварщики, электромонтеры.**
**Администрация. Тел.: 8(83541)60-2-39, 8-905-342-98-11.**

«Муркашри выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен станци» патшалăх учрежденийĕн коллективĕ кунта ĕçлекен ветврачсен – И.Ю. Кириллован ашшĕ, Г.Т. Кириллован шăллĕ

**Юрий Тимофеевич КИРИЛЛОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки тăванĕсемпе тата вĕсен çемйипе тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор - 62-1-36, ответственный секретарь - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики и социальной жизни - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Белов А.П.
Номер подписан 13.02.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3825.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.